Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

73 (7815) № ✻ Шăмат кун, 2010 ҫулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 4-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Вĕренӳ ҫулĕ пуҫланчĕ

## Умра – пысăк тĕллевсем

Кăҫал Чуманкассинчи вăтам шкулта пĕрремĕш шăнкăрав 224 ачашăн янăрарĕ. Вĕсенчен 24-шĕ вара пысăк чечек ҫыххисем хыҫĕнче кăшт кăна курăнакансем – пĕрремĕш класа каякансем. Пĕлӳ кунĕпе саламлакансем ытларах вĕсене вĕрентсе каласа тăрăшулăх, чăтăмлăх сунчĕҫ. Район администрацийĕн пуҫлăхĕн пĕрремĕш ҫумĕ – ял хуҫалăх пайĕн пуҫлăхĕ В. Калинин, шкул директорĕ В. Васильев, вырăнти ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ Л. Ковалева, Чапаев яч. хис. хуҫалăхăн ертӳҫи И. Захаров, Чкалов яч. хис. хуҫалăхăн тĕп бухгалтерĕ Н. Никитина – нумайăшĕн килнĕ вĕренекенсемпе учительсене, ашшĕ-амăшĕсене уяв ячĕпе саламлама.



Кăҫал шкулти учительсен коллективĕ тепĕр ҫамрăк специалистпа та пуянланчĕ: Надежда Михайловна Мясникова ачасене информатика тата акăлчан чĕлхи предмечĕсене вĕрентме тытăнĕ. Ҫамрăк специалист та хăйпе паллаштарса уява пухăннисене Пĕлӳ кунĕпе саламларĕ.

Ҫуллахи вăхăтра хуҫалăхсенче тăрăшса ĕҫленĕшĕн хăш-пĕр вĕренекенсем Тав ҫырăвĕсем илме тивĕҫ пулчĕҫ. «Регионы – сотрудничество без границ» ĕҫлĕ курава активлă хутшăннăшăн кăҫал 11 класа каякан Анна Волкова районти вĕрентӳ пайĕн Тав ҫырăвне тивĕҫрĕ.

Пĕрремĕш хут парта хушшине ларма хатĕрленекенсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕҫ. Хыҫҫăнах пĕрремĕш шăнкăрав сасси янăрарĕ. Вăл пурнете парта хушшине йыхравласа ачасен прависем ҫинчен пĕлме пĕрремĕш урока чĕнчĕ.

Унччен вара ачасен хавасла кулли, пĕр-пĕрне чарсах хăйсен учителĕпе юлташĕсене ҫуллахи каникула мĕнле ирттерни ҫинчен каласа пани шкул коридорĕсенче янăраса тăчĕ.

Вĕренӳ ҫулĕ хаваслăн пуҫланчĕ. Умра – пурнăҫа кĕртмелли пысăк тĕллевсем. Учительсен те, шкул ачисен те.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: шăнкăрав хыҫҫăн – пĕрремĕш хут парта хушшине.**

2010 ҫулхи халăх ҫыравĕ

## Вăхăт нумаях юлмасть

Сентябрĕн 2-мĕшĕнче ЧР Правительство ҫуртĕн пĕчĕк залĕнче видеоконференци мелĕпе 2010 ҫулхи Пĕтĕм Раҫҫейри халăх ҫыравне ирттерессипе ĕҫлекен республика Правительство комиссийĕн черетлĕ ларăвĕ иртнĕ. Пирĕн районта видеоконференци ĕҫне район пуҫлăхĕ, халăх ҫыравĕн районти комиссийĕн председателĕ Ю.А. Иванов, Чăвашстатăн Муркаш районĕнчи предприятисен статистикин пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ З.И. Виноградова, район администрацийĕн экономика пайĕн пуҫлăхĕ Э.И. Симакова хутшăннă.

Комисси ларăвĕнче республика халăх ҫыравне епле хатĕрленсе ҫитни, ҫыравра ҫыхăннă ҫынсен хăрушсăрлăхне тивĕҫтересси, документсене лайăх упрасси пирки ыйтусем пăхса тухнă.

Пирĕн районта пĕтĕмпе шутлав участокĕсем 91, инструктор участокĕсем 23, ҫырав участокĕсем 6, стационарлă участоксем 12 туса хунă. Ҫырав ĕçĕсене татах 152 ҫынна явăҫтараççĕ. Вăл шутран 2 ҫынна ĕҫпе тивĕҫтерекен центртан, вĕренӳ заведенийĕсен 13 студентне, предприятисен, учрежденисен тата организацисен 68 ĕҫченне, социаллă службăсен тата обществăлла организацисен 7 ĕҫченне, ял тăрăхĕсенче ĕҫлекенсене 24 ҫынна тата ытти категорисене кĕрекенсене 38-ăна.

Ҫырав ирттерме 515 пин тенкĕ ытла кирлĕ пулать. Вăл шутран пӳлĕмсем арендăлама 46,3 пин тенкĕ, пӳлĕмсене талăкĕпех хуралласине йĕркелеме 191,7 пин тенкĕ, транспорт услугисем валли 264 пин тенкĕ, ҫыхăну услугисем валли 12,9 пин тенкĕ.

**«Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене 2010 ҫулхи сентябрь уйăхĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнмалли график**

| Хăш кун | Йышăнмалли вăхăт | Кам йышăнать |
| --- | --- | --- |
| Сентябрĕн 7-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Игорь Васильевич НИКОЛАЕВ,** политканаш членĕ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич ячĕпе хисепленекен хуҫалăх ертӳҫи |
| Сентябрĕн 10-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Лилия Юрьевна ТАРАСОВА,** политканаш секретарĕн ҫумĕ, район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕҫтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕҫлекен пайĕн пуҫлăхĕ |
| Сентябрĕн 14-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ,** политканаш членĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ |
| Сентябрĕн 17-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Юрий Александрович ИВАНОВ,** «Пĕрлĕхлĕ Раҫҫей» партин вырăнти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ, район администрацийĕн пуҫлăхĕ |
| Сентябрĕн 21-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Станислав Степанович ИВАНОВ,** Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕн В.А. Морозовăн пулăшаканĕ |
| Сентябрĕн 24-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Владимир Аркадьевич КАЛИНИН,** политканаш членĕ, район администрацийĕн пуҫлăхĕн пĕрремĕш ҫумĕ, район администрацийĕн ял хуҫалăх пайĕн пуҫлăхĕ |

ҪЫРАНТАРУ

**Хаклă вулаканăм!**

**Райхаҫата ҫĕнĕ ҫултан илсе тăма ҫырăнтарас тапхăр пырать. Ҫырăнтару хакĕ унччченхиех – 191 тенкĕ 70 пус (ултă уйăха).**

Тасалăхпа тирпейлĕхшĕн

## Маттур, Мăнсĕнтĕрсем!

Ялсене симĕслентерес тата тирпей-илем кĕртес енĕпе республикăра ирттерекен смотр-конкурсăн 2010 ҫул итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Мăн Сĕнтĕр ялĕ унта виҫĕмĕш вырăн йышăнма пултарнă.

Чăваш Республикин Президенчĕн 2004 ҫулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнчи 107 № «Паркасемпе садсен ҫулталăкĕ ҫинчен» Указне тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2004 ҫулхи октябрĕн 15-мĕшĕнчи 246 № «2005 ҫулта Чăваш Республикинче Паркасемпе садсен ҫулталăкне ирттересси пурнăҫламалли мероприятисен планне ҫирĕплетесси ҫинчен» йышăнăвне пурнăҫа кĕртсе пынă май республикăра ҫулленех ялсене симĕслентерессипе тата тирпей-илем кĕртессипе конкурс ирттереççĕ.

Муркаш ялĕ 2008 ҫул итогĕсемпе ҫак конкурс ҫĕнтерӳҫи пулса тăнăччĕ. 2010 ҫулта асăннă конкурса Мăн Сĕнтĕр ялĕ те хутшăнчĕ. 2010 ҫулхи августăн 26-мĕшĕнче Чăваш Республикин Строительство министерствинче ялсене симĕслентерес тата тирпей-илем кĕртес енĕпе республикăра ирттерекен смотр-конкурсăн 2010 ҫул итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Пĕрремĕш енпе («Чăваш Республикинче яла симĕслентересси тата тирпей-илем кĕртесси») хула тата ял тăрăхĕсен хушшинче Мăн Сĕнтĕр ялĕ республикăра 3-мĕш вырăн ҫĕнсе илнĕ.

Ҫĕнтерӳҫĕсене саламланă май малашне пурне те ялсенчи тасалăхпа тирпейлĕхшĕн ытларах ҫине тăма сĕннĕ пулăттăмăр. Мĕншĕн тесен ҫакă хамăршăнах.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Тӳрĕ лини

## Сирĕнтен ыйтусем кĕтеççĕ

Кăҫалхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ 11 сехетрен тытăнса 14 сехетчен уйрăм ҫынсем валли «тӳрĕ лини» ирттерет. Ун чухне граждансен пурлăх, ҫĕр тата транспорт налукĕсене тӳлессипе ыйтусем ҫине хуравсем илме май пулĕ. Кунпа пĕрлех тӳлесе тăракан налуксем тĕлĕшпе парăмсем пуррипе ҫуккине те пĕлме пултарăр.

Муркашсен «тӳрĕ лини» телефонĕн номерĕ 8(83547)22-5-92.

Ҫамрăксене пĕлме

## Стипендие тивĕҫес тесен

Чăваш Республикин Президенчĕ хăйĕн йышăнăвĕпе пĕрремĕш ҫул мар ĕнтĕ пултарулăхпа уйрăмах палăрса тăракан ҫамрăксене студентсене – 14 ҫул тултарнисенчен пуҫласа 30 ҫулчченхисене – ятарлă стипенди парса чыслассине ырă йăлара.

Ҫак стипендие илес текенсем хушшинче вĕренӳре ăнăҫлă ĕлкĕрсе пыракансен, бизнес-проект хатĕрлессипе, наука, пултарулăх, производство, ертсе пырас ĕҫ енĕпе ҫитĕнӳ тăваканссем пулма пултараççĕ.

Пирĕн районта та ҫакнашкаллисем ҫук мар. Ҫавăнпа та сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа октябрĕн 1-мĕшĕччен пур предприятисемпе организацисен, учрежденисен тата тĕрлĕ органсен хăйсен коллективĕсенчен кандидатурăсем тăратма май пур. Тĕплĕнрех кун пирки район администрацийĕн вĕрентӳ, ҫамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕнче пĕлме пултаратăр.

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă ҫыннăмăра, юратнă мăшăра, аннене, асаннене, кукамая – Анаткас Турай ялĕнче пурăнакан **Елизавета Павловна ТОЛСТОВĂНА** 80 ҫул тултарнă ятпа чунчĕререн саламлатпăр.

Пире, ачусене, пурнăҫ ҫулĕ ҫине тăма ăстăн, вăй-хăват, сывлăх панишĕн тав тăватпăр сана. Ҫемьере яланах килĕшӳ, тулăх пурнăҫ пултăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрĕвĕсем, мăнукĕсемпе кĕҫĕн мăнукĕсем, ҫывăх тăванĕсем.**



Юратнă хĕрĕме, мăшăрăма, аннене, мамака, хуньамана – Оринин ялĕнче пурăнакан **Галина Андреевна ИВАНОВĂНА** юбилей ячĕпе чунчĕререн саламлатпăр. Ҫăл куҫ пек тапса тăракан вăй-хал, юман пек ҫирĕп сывлăх сунатпăр. Кун-ҫулу такăр пултăр, кĕрекӳ ҫăкăр-тăвартан ан татăлтăр, ĕмĕтӳсем пурнăҫланса пыччăр. Эпир сана ăшă кăмăлушăн, пур вăхăтра та пире пулăшма май тупнăшăн тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, 2 ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем, пĕрле ĕҫлекен юлташĕсем.**

Пирĕн хаклă та юратнă ҫыннăмăра – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Светлана Либкнехтовна АФАНАСЬЕВĂНА** ҫывхарса килекен сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Пурнăҫ ҫулĕпе шанчăклăн утма юман пек ҫирĕп сывлăх, вăй-хал сунатпăр. Телейĕ те, савăнăҫĕ те санпа пĕрлех ҫӳреччĕр, усал-тĕселпе чир-чĕртен вара Турри сана яланах сыхлатăр. Яланах паянхи пек ăшă кăмăллă та ырă чунлă пул. Эпир сана юрататпăр.

**Саламласа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, Ивановсен ҫемйи, ҫывăх тăванĕсем.**

Оринин ялĕнче пурăнакан **Галина Андреевна ИВАНОВĂНА** юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ырă кăмăллă, пултаруллă, хисеплĕ хăйматлăх анне! Сана ҫак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăҫра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Пурнăҫу ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăҫлантăр. Сĕтелӳ ҫăкăр-тăвартан, кил-ҫурту тăван-пĕтенрен ан татăлтăр. Ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе савăнса пурăнăр. Кун-ҫулу вăрăм та телейлĕ пултăр.

**Саламлаканĕсем: хăйматлăх ачисем, Вершковсен, Ивановсен ҫемйисем.**



Юратнă аннене, асаннене, кукамая – Атапай ялĕнче пурăнакан **Ирина Степановна САДОВНИКОВĂНА** 70 ҫулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Пире, ачисене, ӳстерсе пурнăҫ ҫулĕ ҫине кăларнăшăн ҫĕре ҫити пуҫ таятпăр. Турă сана чир-чĕрпе усал-тĕселрен сыхлатăр. Тавах ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, ҫывăх тăванĕсем.**

# Çĕнĕлĕхсем те çук мар

Пенси ыйтăвĕсемпе

***Юлашки вăхăтра тĕрлĕ сферăра пурнăçа кĕрекен çĕнĕ сакунсемпе положенисем, çĕнĕ йĕркесем сахал мар. Çынсене пенсисемпе, пособисемпе тивĕçтерес тĕлĕшпе те вĕсем пурах. Çĕнĕлĕхсем пирки пенси-пособи илсе тăракансене вăхăтра пĕлтерни вара пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавна май район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн специалисчĕсемпе тĕл пулнă май çĕнĕлĕхсем пирки тĕплĕнрех ăнлантарса пама ыйтнă.***

## Соцпакет е укçа – вăхăт октябрьччен

Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕччен федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансен 2011 çулта социаллă çăмăллăхсен пакечĕпе мĕнле усă курасси пирки йышăну тума тивет. Социаллă çăмăллăхсемпе усă курма пăрахассин процедурине ансатлатнă. Пенси фончĕн управленине пĕр хут пырса заявлени çырса памалла кăна. Урăхларах йышăну тăвиччен унченхи заявлени вăйра шутланать.

Соцпакет вырăнне укçан илсе тăрасси пирки унченхи çулсенче заявлени çырса панă çынсен ку йышăнăва тепĕр хут пырса заявлени парса çирĕплетме кирлĕ мар. Енчен те вара çăмăллăхсемпе усă куракан юлашки вăхăтра сывлăхĕ хавшанă, эмелсем илсе тăма е санаторипе курорт сиплевне кайма тивет пулсан, унăн çăмăллăхсемпе усă курма тытăнасси пирки те шутласа пăхма юрать. Кун пеккисен заявленисене Пенси фончĕн управленине октябрĕн 1-мĕшĕччен парас пулать.

Соцпакетăн пĕтĕмĕшле хакĕн виçи халĕ уйăхне 705 тенкĕ те 10 пуспа танлашать. Вăл шутран медицина пайĕ (тухтăр панă рецептпа эмелсем тӳлевсĕр илесси, тухтăр сĕнĕвĕпе санаторие каясси) – 627 тенкĕ, транспорт пайĕ (хула тулашĕнчи поездпа тӳлевсĕр çӳресси, санатори çул укçи тӳлемесĕр кайса килесси) – 78 тенкĕ те 10 пус.

Соцпакета е ун вырăнне паракан укçа-тенкĕне федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансем тивĕçеççĕ. Кунта Аслă Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемпе участникĕсем, тĕрлĕ çапăçусене хутшăннă ветерансем, вăрçă ветеранĕсен тăлăх юлнă мăшăрĕсем, радиаци катастрофине пула инкек тӳснĕ граждансем кĕреççĕ.

Пирĕн районпа илес пулсан, хальхи вăхăтра федераллă çăмăллăхсемпе 3076 çын усă курать. Вĕсенчен 200-е яхăн çын соцпакетпа е унăн пĕр пайĕпе усă курать. Çулталăк пуçланнăранпа пĕтĕм соцпакет е унăн пĕр пайĕ вырăнне укçан илсе тăма тытăнасси пирки 95 заявлени йышăннă. Ытларах кунта 2010 çулта социаллă çăмăллăхсемпе усă куракансем кĕреççĕ. Соцпакетпа е унăн пĕр пайĕпе çĕнĕрен усă курма тытăнасси пирки 4 заявлени йышăннă.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

## Пухăнакан пенсисене инвестицилекенсем йышланаççĕ

Çулталăк пуçланнăранпа республикипе 15 пин çын ытла, районĕпе 92 çын хăйсен пенсин пухăнакан пайне ăçта йĕркелесси пирки йышăну тунă. Иртнĕ çулхи çак вăхăтра кун пирки республикипе 13,5 пин, районĕпе 641 заявлени панă пулнă. Йышăннă заявленисенчен ытларахăшĕ – Раççей Пенси фондĕнчен патшалăхăн шутланман пенси фончĕсене куçасси пирки. Теприсем патшалăхăн шутланман пĕр пенси фондĕнчен теприне куçма кăмăл тунă. Виççĕмĕш вырăнта – патшалăхăн шутланман пенси фондĕнчен РФ Пенси фондне куçма кăмăл тунисем. Ертсе пыракан компанисене суйласа илекенсем нумай мар.

Заявленисене Раççей Пенси фондĕнче декабрĕн 31-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Çавăн пекех вĕсене алă пуснисене çирĕплетессипе Раççей Пенси фончĕпе килĕшӳ тунă трансферагентлă центрсенче – банксенче, патшалăхăн шутланман пенси фончĕсенче тата ытти организацисенче те пама пулать. Чăваш Республикинче кун пек килĕшӳсем Перекет банкĕпе, «Связь-банкомпа» тата патшалăхăн шутланман «Большой НПФ», «КИТ Финанс», «Промагрофонд» пенси фончĕсен филиалĕсемпе пур.

Патшалăх ертсе пыракан 58 компанин тата патшалăхăн шутланман 127 пенси фончĕн списконе çирĕплетнĕ. Компанисемпе фондсен тупăш шайĕ тĕрлĕрен. Çавăнпа та вĕсене суйласа илнĕ чухне 2–3 çулхи ĕç-хĕлĕн итогĕсене танлаштарса пăхни ытлашши пулмĕ. Ертсе пыракан компанисем пухăнакан пенсисене инвестицилени пирки информацие кашни кварталтах Пенси фончĕн официаллă сайтĕнче (www.pfrf.ru) вырнаçтараççĕ. Патшалăхăн шутланман пенси фончĕсен тупăшлăхĕ пирки вĕсен хăйсен сайчĕсенче пĕлме пулать.

Иртнĕ çулталăкра пухăнакан пенси виçисене инвестицилении кăтартăвĕсем Пенси фончĕ заказлă çырупа ярса панă харпăр хăйĕн лицевой счечĕ пирки пĕлтернисенче те пур. Енчен те гражданин ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне патшалăхăн шутланман пенси фончĕсем урлă йĕркелет пулсан, вăл алла пĕлтерӳ хучĕ иккĕ илет – пĕри Раççей Пенси фондĕнчен харпăр хăйĕн лицевой счечĕ пирки çырса пĕлтерни тата тепри патшалăхăн шутланман пенси фондĕнчен ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕн пенси счечĕ пирки пĕлтерни. Хăйсен пенсийĕн пухăнакан пайĕ валли страховани взносĕсем хăçан та пулин тӳленисем пурте пухăнакан пенсие инвестицилеме пултараççĕ. Ытларах кусем вĕсем 1967 çулта çуралнă е унран çамрăкрах арçынсемпе хĕрарăмсем, çавăн пекех миçе çултине пăхмасăрах патшалăх пенси виçисене хушса финанслассин программине хутшăнакансем пурте. Муркаш районĕпе ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕ 3600 ытла çыннăн (республикипе 675 пин ытла çыннăн) йĕркеленет.

## Ача амăшĕн капиталĕ шучĕпе – 12 пин тенкĕ

Асăннă суммăна ача миçе çултине пăхмасăрах илме тата хăйсем пĕлнĕ пек усă курма юрать. Алăран пĕр хут паракан 12 пин тенкĕне илес текенсем валли заявлени çырмалли вăхăта 2010 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнче йышăннă 241-ФЗ № Федераллă саккунпа палăртнă. Енчен те иккĕмĕш е хыççăнхи ачана 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2010 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕччен çуратнă (усрава илнĕ) пулсан, заявленисене 2010 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен йышăнаççĕ. 2010 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2010 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен хи тапхăрта çуратнă пулсан вара заявленисене 2011 çулхи мартăн 31-мĕшĕнчен кая юлмасăр памалла.

Çапла вара 2009 çулхи апрелĕн 28-мĕшĕнче йышăннă 72-ФЗ № Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн унчен 12 пин тенкĕ алăран илнĕ сертификат хуçисен ку суммăна тепĕр хут илме право пур. Енчен те вара ача амăшĕн капиталĕн ытларах пайĕпе усă курса пĕтернĕ, юлнă суммa 12 пин тенкĕне çитеймест пулсан юлнă суммăна илме пулать.

Асăннă суммăна илме Раççей Пенси фончĕн управленине заявленипе пĕрле илсе пымалли документсем нумай мар: заявлени паракан пăспорчĕ, ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕ тата Пенси фончĕ укçана куçарса пама банкри счет реквизичĕсен документчĕ.

Заявление пĕр уйăх хушшинче пăхса тухаççĕ. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулсан палăртнă суммăна заявлени панă кунран тытăна икĕ уйăх хушшинче куçарса параççĕ.

Районĕпе пĕтĕмпе ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕсене 2007 çултан тытăнса 738 хĕрарăм илнĕ (республикипе 22 пин çын ытла). 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ача амăшĕн капиталĕн виçи 343378 тенкĕ те 80 пуспа танлашать.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**пай пуçлăхĕ.**

Сăвă йĕркисем

# Юратнă ял – Отаркка ялĕ

**Тăван çĕр-шыв, тăван район, тăван ял, тăван кил-çурт... Пур çыннăн та тăван кĕтесĕ пур. Унта сана нихăçан та кичем пулмĕ, пин-пин çухрăм аякка кайсан та таврăнас килĕ. Отаркка ялĕнче манăн асаннепе асатте, атте, пичче тата эпĕ çуралса ӳснĕ. Çак ялта вырнаçнă ача садне те çӳренĕ, ялти шкулта ăс пухнă. Тăван ялта шывĕ те тутлăрах, сывлăшĕ те усăрах. Ялăма юратса, сума суса сăвă йĕркисем парнелес килет.**

Юратнă ял – Отаркка ялĕ,
Епле хитре эсĕ çулла!
Улăх-çаранĕ пит илемлĕ,
Кайма пулать çулла пулла.
Чечек çинче сĕрлет пыл хурчĕ,
Ăш çил вĕрет-çке кăнтăртан,
Савса пăхать сутă хĕвелĕ,
Юрлать сар кайăк кăмăлтан.

Юратнă ял – Отаркка ялĕ,
Эс питĕ тулăх кĕркунне.
Пухать чăваш çынни тыр-пулă,
Пустарăнать кĕрекене.
Чăваш сăри питĕ хăватлă,
Усăлтарать чун-чĕрене.
Чăваш юрри янрать хаваслă,
Каять сасси ун инçете.

Юратнă ял – Отаркка ялĕ,
Шап-шурă тумлă эс хĕлле.
Сана кĕтет, савать мĕн пурĕ,
Йĕлтĕр сырса тухать Илле.
Ял çийĕн Хĕл Мучи туяллă
Вĕçсе килет ачсем патне.
Вăл шурă юр пекех сухаллă,
Парса тухать пурне парне.

Юратнă ял – Отаркка ялĕ,
Ем-ешĕл эсĕ çуркунне.
Хывать хĕл тумтирне уй-хирĕ,
Сывлать пит тарăн çĕр-анне.
Чечекленет тăван тавралăх,
Илемленет вăл кунсерен.
Трактор сасси кĕрлет. Ачалăх
Шуса иртет куç умĕнчен.

**Ольга ПАВЛОВА,**
**ЧПУ студентки.**

Ĕçре тăрăшуллисем

# Апат ытлă-çитлĕ пулĕ



***Халăхра çурхи кун çулталăк тăрантарать тесе калаççĕ пулин те, кĕрхи кунсен пĕлтерĕшĕ те çурхинчен каях мар пулĕ. Мĕн акса-лартса хăварнине йĕркеллĕ пухса кĕртсе пĕтермелле, управа хумалла, общественăлла выльăх-чĕрлĕх валли апатне çителĕклĕ янтăламалла. Çанталăк условийĕсем япăхрах килнине пула вара çĕр ĕçченĕн выльăх апатне кирлĕ чухлех хатĕрлеме майсем çитсех каймарĕç.***

***Çак ыйăвăрлăхран тухма май çук тесе шутламаççĕ «Ударник» хуçалăхра. Республикăри ытти районсенче, Чул хула облаçĕнче улăм пухса пресласcине, хуçалăха кӳрсе килессине йĕркеленĕ кунта. Акă Вăрмансасси участокĕнче водительте вăй хуракан Алексей Егорович Семенов çак кунсенче Чул хула облаçĕнчен автомашинăпа улăм турттарнă çĕрте хăйне лайăх енчен кăтартать. Сăмах май вăл хуçалăхра вырма ĕçĕсем пынă тапхăрта та тырă турттарнă çĕрте ырă ята тивĕçнĕ.***

**Сăн ӳкерчĕкре: А.Е. Семенов черетлĕ рейса тухма хатĕр.**

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Хаксем

# Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен хакĕсем ӳсмĕç

Юлашки вăхăтра апат-çимĕç рынокĕнче хăш-пĕр ушкăнри таварсене ытларах илме тăрăшни палăрчĕ. Кусем вĕсем çăнăх, кĕрпе изделийĕсем, сахăр, тип çу. Çавна май вĕсен хакĕсем те ӳсмерĕç мар. Çавна палăртса хăвармалла. Нумай предприятисен ертӳçисем çавăнпа усă курса услам туса юласшăн курăнать. Çак лару-тăрура вĕсем ĕçлесе илмен хушма тупăш хăйпăтса юлма тăрăшаççĕ.

Хаксене ӳстерме шута илмелли нимĕнле сăлтав та çук. Хальлĕхе сентресем çинче вырттакан продукцие иртнĕ çулхи тухăçран хатĕрленĕ. Вĕсене туса илме кайнă тăкаксем ниепле те ӳсме пултарайман. Эпир халĕ кураканни вăл – нимĕнпе те сăлтавланман хумханупа пăлхану кăна. Ку çанталăкăн япăх условийĕсемпе çыхăннă.

Çӳлте асăннă апат-çимĕç продукчĕсен, уйрăмах вара социаллă пĕлтерĕшлĕ шутланакан таварсен хакĕсене сăлтавсăрах ӳстернине чарас тесе район администрацийĕ пĕтĕмпех тăвать. Типĕ те шăрăх çанталăка пула ял хуçалăхĕнче пулса тăнă чрезвычайлă лару-тăрăва тӳнтерле витĕмне пĕтерес, çынсене апат-çимĕçпе çителĕклĕ тивĕçтерес тесе районта чи малтан татса памалли мерăсене йышăннă. Выльăхсене хĕл каçарма апат запасне ӳстерес тĕллевпе ял хуçалăх предприятийĕсемпе уйрăм хушма хуçалăхсем 2010 çулхи августăн 25-мĕшĕ тĕлне Чул хула, Киров облаçĕсенчен, Мордови, Çармăс республикисенчен тата хамăр республикăри ытти районсенчен 1668 тонна фуражлăх тырă, 822 тонна утă, 1405 тонна улăм, 217 тонна хывăх, 321 тонна комбикорм кӳрсе килнĕ. Ку енĕпе халĕ те ĕçлеççĕ.

Районта таварсем ваккăн сутассин калăпăшĕ 80–85 процент таран Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсем çине тивет. Вĕсенче яланах хакĕсене ӳстермен апат-çимĕç продукчĕсен сăпасĕ 42–52 кунлăха пур.

Район администрацийĕ кашни эрнерех социаллă пĕлтерĕшлĕ шутланакан таварсен хакĕсен мониторингне иртерет. Ку шута лекекен таварсен ячĕсене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ хăйĕн 2007 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнчи 266 № «О мерах по сдерживанию роста цен на социально значимые виды продовольственных товаров» йышăнăвĕнче палăртнă. Ку шута таварсен çак тĕсĕсене кĕртнĕ:

– ыраш тата тĕрлĕ çăнăх хутăшĕнчен пĕçернĕ çăкăр;
– тулă çăнăхĕ;
– пастеризациленĕ 3,2 процент таран çуллă ĕçмелли сĕт;
– 9 процент таран çуллă тăпăрч;
– 2,5 процент таран çуллă кефир;
– 15 процент таран çуллă хăйма;
– выльăх-чĕрлĕх çăвĕ (хамăр çĕр-шывра туса кăларни);
– тип çу;
– çĕр улми.

Мониторинг итогĕсемпе анализсем тăватпăр, асăннă ушкăна кĕрекен таварсен хакĕсене ӳстерме кирлĕ марри пирки сĕнӳсем паратпăр. Мониторинг итогĕсене Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн тата сутуилӳ министерствине пĕлтерсе тăратпăр. Кун пек мониторингсене çавăн пекех вĕрентӳ тата сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсем валли сутăн илекен апат-çимĕç продукчĕсен хакĕсем тĕлĕшпе те иртттерессине йĕркеленĕ.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

Врач канаш парать, асăрхаттарать

# Шăмăсем çирĕп пулччăр

Шăмăсем патрак та хăвăрт хуçăлни остеопороз чирĕ аталанма пуçланине пĕлтерет. Çакнашкал чухне шăмăсем йывăрах мар суранлансан та, сăмахран, çĕр çине ÿксен те хуçălаççĕ. Остеопороз чирĕ пулсан вара йывăр тиевсем йăтнă чухне çурăм шăммин сыпăкĕсем те хуçăлма пултараççĕ.

50 çултан иртнĕ хĕрарăмсен 50 процентĕн çак чир аталанас хăрушлăх пур. Раççейри арçынсен вара ку хăрушлăх сахалрах – 12 процентĕн çеç.

Остеопороз тĕрлĕ чирчĕр, сăмахран, эндокрин чирĕсем пуррине тата эпир хамăр мĕнле пурнăç йĕркине тытса пурăннинчен те килет. Çапла вара организмра кальци сахал пулни, D витамин çитменни те шăмăсен патраклăхĕ патне илсе çитерме пултарать. Çак чире аталанма пулăшакан факторсенчен тепри вăл – пирус туртнипе эрех чылай ĕçни. Хускану – пурнăç тесе ахаль каламан: çын хăйĕн пурнăçне активлă хусканусемсĕр ирттерет тата пĕрмай ÿкет пулсан та остеопороз пулма пултарать. Чирлĕ çыннăн вара çурăм шăммин сыпăкĕсем хуçăлни питĕ ыраттарать. Ыратни пÿре е пĕвер таврашĕнче чикнĕн туйăннă пек пулма пултарать. Ÿсĕрнĕ чухне ыратни татах та вăйланать, вырсса ÿсĕрнĕ чух кăшт çăмăллатать.

Çавăнпа та остеопороз чирне асăрхаттарас тесен кашни çыннăнах хăйĕн кĕлетке висине нормăра тытса тăмалла, кальци тата D витамин пур продукта çимелле. Кофе нумай ĕçес çук (кунне 4 чашăкран ытла мар!), ытлашши тăварлă та çиме тăхтмалла. Пирус туртмасăр, эрех ытлашши ĕçмесĕр пурăнмалла, активлă хусканусем тума та кахаланмалла мар. Çак йĕркене тытни сире остеопорозран сыхланма пулăшĕ.

**Т. ШАРИКОВА,**
**эндокринолог врач.**

Милици хроникинчен

# Пĕрисен – хуйхă, теприсен – пуясси

Шомикра иртнĕ кунсенче пулнă çак ĕç. Электричество пăралукĕсем йĕркеллĕ пулманнипе пĕр хĕрарăмăн хуçалăхĕнче пушар тухать. Çулăм пÿрте те, ытти çурт-йĕре те тĕппипех пĕтерет.

Пушар пĕтĕмпех илсе каять теççĕ те, анчах та тепĕр ик-виç кунтан çак вырăна усламçăсем килсе пушартан юлнă тимĕр-тăмăра КамАЗ машинăпах тиесе тухса каяççĕ иккен. Кил хуçине 7 пин тенкĕлĕх тăкак кÿреççĕ.

Çын хуйхи çинче телей курмах пулмĕ пуль çав. Халĕ вăрăсене Уголовлă кодексăн 158 статйи кĕтет.

# Юнланнă çĕçĕпе пуртă, виçĕ ура...

Шăпах çак япаласене тупаççĕ районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем вăрăсенчен пĕрин хуçалăхне пăхса çаврăннă чух. Кунсăр пуçне тата 13 кг сурăх какайĕ те çакăнтах тупăнать. Преступлени тунă вырăнта вара – Хыркасси ялĕнчи пĕр кил таврашĕнче – ура йĕрĕсене палăртаççĕ, шурă сурăх виллине кураççĕ.

Çапла малтанах шутласа хунипе Чĕпĕлкассинче пурăнакан икĕ арçын сурăхсем вăрлама ют яла çитнĕ пулнă. Çуллахи вăхăтра сурăхсем тултах çĕр каçни вара çаксемшĕн питĕ меллĕ çаврăнса тухнă. Икĕ çулхи шурă сурăхпа çулталăкри хура сурăха куç хываççĕ кукăр алăсем. Çĕрлехи вăхăтра сасă тухасран сурăхсен «чĕлхисене» касаççĕ.

Какайлă пулатпăр тесе шутланă пулĕ те арçынсем, халĕ какай çиесси çинчен мар, явап тытасси çинчен шутлама тивет.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

# Хăйĕн ĕçĕнче пултарулла

Вулакансем çыраççĕ

Кăçалхи шăрăх çул пурин тÿсĕмлĕхне те пĕр шелсĕр тĕрĕслерĕ. Çынсене çеç мар, пур ÿсен-тăрана та, выльăх-чĕрлĕхе те йывăр килчĕ. Кунĕпех хĕвел питтинче çÿрекен ĕнесем час-часах чирлерĕç. Ветеринарсене пĕр канăç та памарĕç пулĕ.

Çатракассинчи ветеринари участокĕн ветфельдшерĕ Елизавета Геннадьевна Степанова ĕçне чунтан парăнса, тĕплĕн пурнăçлать. Планпа палăртнă прививкăсемпе тĕрлĕ операцисене вăхăтра тăвать, ял çыннисен ыйтăвĕсене те яланах татса парать.

Выльăх çын мар: чир мĕнрен пуçланнине, ăçтан ыратнине каласа параймасть. Елизавета Геннадьевна чир паллисене тĕплĕн тĕрĕслет, тĕрĕс диагноз лартать те сиплеме пуçлать. Ирпе-каçпа та, кирлĕ пулсан çĕрле те чирлĕ выльăх çумĕнчен уйрăлмасть, вăл сывалса çитичченех килсе тĕрĕслесе тăрать. Ялтан яла, килтен киле çÿрет выльăх тухтăрĕ: участокĕ пĕчĕк мар-çке-ха. Выльăх хуçисене кирлĕ сĕнÿсем парать, калаçусем ирттерет.

Пĕлĕвĕпе ăсталăхĕ Елизавета Геннадьевнăн çителĕклех. Шкулта чухнех тăрăшса вĕреннĕ, кайран штукатур-маляра вĕреннĕ пулнă. Анчах чунĕ выльăх патнех туртнă. Çапла вара Лиза 1980 çулта Патăрьелĕнчи ветеринари училищине вĕренме кĕрет, ун хыççăн Вăрнарти техникумра вĕренсе алла ветеринари фельдшерĕн дипломне илет. Çемье çавăрсан шăпа Лизăна Чул хула облаçне илсе çитерет. 1998 çулччченех унти выльăх-чĕрлĕх ферминче вăй хурать вăл. Тăван яла куçса килсен Çатракассинчи ветучасток фельдшерĕнче ĕçлеме тытăнать.

Мăшăрĕпе – Геннадий Александровичпа – икĕ ывăл ÿстереççĕ, вата амăшне те тирпейлĕ пăхса усраççĕ.

Елизавета Геннадьевнăна ял халăхĕ хисеплет. Ĕçре ăста, пултарулла, ĕçчен специалист пулнăшăн çеç те мар, халăхпа сăпайлă пулнăшăн та, вăхăтра кирлĕ сĕнÿсем панăшăн та. Кăçалхи çултан Елизавета Геннадьевна ветучастока ертсе пыма пуçларĕ. Эпир, выльăх-чĕрлĕх усракансем, ăна малашне те çитĕнÿсем тума ырлăх-сывлăх сунатпăр, иртнĕ çуралнă кунĕ ячĕпе те саламлатпăр.

Елизавета Геннадьевна пек çынсем ытларах пулсан çут тĕнче те илемлĕрех пулĕ.

**Ял халăхĕ ыйтнипе**
**Ф. МАТВЕЕВА,**
**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Очăкасси ялĕ.


Кадастровым инженером ООО «НПП «Инженер», адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, ingenercheb@ya.ru, тел.: 28-06-06 выполняются кадастровые работы по выделу земельных участков в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из состава земель сельскохозяйственного назначения, расположенного в Чувашской Республике, Моргаушском районе, на территории СХПК «Нива», поле № 1, полевой севооборот №2, участок №2, северо-западная часть кадастрового квартала 21:17:050801.

Заказчиками кадастровых работ являются: Ермолаева Р.А., Архипов В.К., Ермолаев Г.В., Ижутова Р.А., проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Мижары.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Б. Сундырь, ул. Советская16 «06» октября 2010г. в 11 часов.

С проектом межевых планов земельных участков можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.

Возражения по проекту межевых планов и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с «13» 09. 2010 г. по «28» 09. 2010 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 304.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границ: участки, находящиеся в общей долевой собственности на территории СХПК «Нива» (поле №1, земли Большесундырского сельского поселения.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.

**Участница долевой собственности Егорова Елена Георгиевна, 29.12.1960 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Изедеркино, ул. Молодежная, д. 2, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Чуманкасинское, на территории землепользования СХПК им. Чкалова, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401 площадью 2,56 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Чуманкасинского сельского поселения.**

**2. Егоровой Елене Георгиевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Изедеркино, ул. Молодежная, д. 2.**


## Прогноз погоды с 6 по 12 сентября

www.yandex.ru

| сб 4 | вс 5 | пн 6 | вт 7 | ср 8 | чт 9 | пт 10 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ясно | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность, небольшой дождь | ясно | переменная облачность, небольшой дождь | переменная облачность |
| +18 | +16 | +14 | +10 | +12 | +15 | +7 |
| +8 | +5 | +8 | +2 | +5 | +3 | 0 |


Пĕлтерÿсем. Объявления




**Уважаемые потребители электрической энергии индивидуальных жилых домов!**

Филиал ОАО «МРСК Волги»-«Чувашэнерго» сообщает, что для начисления платы за потребление электрической энергии, прием показаний с индивидуальных приборов учета электрической энергии, установленных в индивидуальных жилых домах, осуществляется с 20 по 24 число каждого месяца по следующим телефонам: 8(83541) 63-2-64 ГБУЭ Моргаушский РЭС.

**Проектирование жилых домов, обществ. и произв. зданий, систем электро- , газоснабжения. Сметы. Свид. СРО. *ООО «Интертехсервис». Моргауши, ул. Мира, 9. Тел.: 62-6-03, 8-903-345-75-76.***

**Услуги буровой машины для рытья колодцев, разного диаметра, с доставкой и установкой колец. Тел.: 8-903-379-09-01. 4-7.**

* * *

**Магазин «Лотос» (д. Рыккакасы) реализует: профнастил оцинкованный, профнастил крашеный, профиль 40х20, трубы для столбов на ограду, диаметром 60 мм, толщиной 5 мм,сетка-«рабица», комбикорм. Скидка на все от 5 до 10 процентов. Принимаем на работу строителей-отделочников. Тел.: 8-917-665-27-26. 2-5.**

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». ВИДЕОНАБЛЮДЕНИЕ. Установка, гарантия и обслуживание. Тел.: 8-905-345-77-19. 3-8.**

**Срубы банные (хвоя, липа) в наличии и на заказ. Пиломатериалы (хвойные, лиственные) в наличии и на заказ. Печки банные. Тел.: 8-927-667-60-61, 8-927-846-01-08. 7-10.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 5-5.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 1-9.**

* * *

**Ремонтная мастерская «РЕМОНТНИК», открывшаяся в здании «Агропромснаба», оказывает услуги по ремонту бытовых приборов, часов и электрооборудования, по установке сантехники, водяных счетчиков и водонагревателей. С. Моргауши, ул. 50 лет Октября, 25. Тел.:(8352)67-30-10. 1-3.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитобетонные блоки с доставкой. Тел.: 89053479915, 67-66-95. 1-5.**

* * *

**СХПК «Герой» Моргаушского района ЧР закупает телок и нетелей черно-пестрой породы, цена договорная; приглашает на постоянную работу газоэлектросварщика, оплата высокая. Тел.:67-5-49, 67-5-48, 8-927-864-31-33.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 5-5.**

* * *

**Керамзитобетонные блоки, щебень гранитный, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, торф. Доставка. Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 2-8.**

* * *

**Требуются отделочники для работы в городе Тамбове. Вахта. Трехразовое питание, проживание в общежитии. Без посредников. Тел.: 8-920-484-56-92; 8-920-038-09-40. Валентин. 2-2.**

**Участник долевой собственности Ванюшкин Николай Меркурьевич, 20.12.1970 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Нискасы, ул. Новая, д. 13, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярославское, на территории землепользования СХПК «Сеятель», участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:130501 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Ярославского сельского поселения.**

**2. Ванюшкину Николаю Меркурьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Нискасы, ул. Новая, д. 13.**

КИРПИЧ

более 500 видов и цветов

ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ

**Газосиликатные блоки**

ТК "ТЕРМИНАЛ"

г.Чебоксары, Канашское шоссе,7/1, тел.30-55-15

г. Новочебоксарск , ул. Промышленная, 41, тел.73-84-12


**Публикация-разъяснение (уточнение)**

Компанией ОАО «Мобильные ТелеСистемы» была дана публикация в №18(7658) от 04.03.2009 г. о планируемом проектировании, строительстве, размещении и эксплуатации 17 опор воздушной линии электропередач (Вл) для электроснабжения металлической башни высотой 70 м. с размещением под башней контейнера-аппаратной станции сотовой связи на земельном участке площадью 300 кв.м., расположенном в д. Верхние Олгаши Моргаушского района вдоль автомобильной дороги «Чебоксары-Ильинка».

Настоящей публикацией разъясняем, что вместо планируемых 17 опор будет размещено 15 опор воздушной линии электропередач (Вл) для электроснабжения металлической башни высотой 70 м. с размещением под башней контейнера-аппаратной станции сотовой связи.

МУП ЖКХ «Моргаушское» выражает глубокое соболезнование семье Петровых в связи со скоропостижной кончиной проработавшего здесь заместителем директора в 2001-2009 г.г.

**ПЕТРОВА**
**Михаила Ефимовича.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**

**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редакторшăн Шапошников В.Л.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.**

**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**

**Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.**
**Пичете панă 03.09.2010 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4017.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.